ЕРЭ -2020



# 2020 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн этнокультура вĕренĕвĕн кафедрин доценчĕ*

## 2-мĕш пай



**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

2-мĕш пайăн 2-8-мĕш ĕçĕсене **тĕрĕс** тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет.

Хурав **тĕрĕс пулмасан** е **вăл пачах пулмасан** – 0 балл лартаççĕ.

**2-мĕш пайăн 2-8-мĕш ĕçĕсене тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 7 балл пухма май пур.**



## 2 Синтаксис тишкерĕвĕ

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Пуш уйăхĕнче кайăксене уйрăмах йывăр. (2)Вĕсем тахçанах йывăç вăррисене, пилеш çырлисене çисе янă. (3)Кайăксем пӳрт-çурт çывăхĕнче апат шыраççĕ. (4)Вĕсем çынсенчен пулăшу кĕтеççĕ. (5) Эпир вĕсене мĕнпе пулăшатпăр?*

*Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.*

*1) кайăксене йывăр (1-мĕш предложени);*

*2) вĕсем çисе янă (2-мĕш предложени);*

*3) апат шыраççĕ (3-мĕш предложени);*

*4) пулăшу кĕтеççĕ (4-мĕш предложени);*

*5) эпир пулăшатпăр (5-мĕш предложени).*

***Хуравĕ:*** ____________________________

## 3 Пунктуаци тишкерĕвĕ

*Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.*

*Алмазов çĕнĕ çуртсем çине те (1) пaçăрхи пек киленсе пăхмарĕ (2) çынсен сăнĕсем те (3) ăна пaçăрхи пек хаваслă курăнмарĕç (4) вĕсем хушшинче вăл паллакансене те (5) шырамарĕ (6) паллакансемпе те тĕл пуласшăн пулмарĕ.*

***Хуравĕ:*** ___________________________

## 3 Синтаксис тишкерĕвĕ

*Хулара пурăнакан куккан аслă ывăлĕ* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

***Хуравĕ:*** ____________________________

## 4 Орфографи тишкерĕвĕ

***Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.***

*1)* ***шукăль*** – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла;

*2)* ***кукăр-макăр*** – мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;

*3)* ***чи пултаруллă*** – *чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;

*4)* ***юрлаттăм*** – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1-мĕш сăпатра икĕ *т* çырмалла;

*5)* ***тухать-ши*** – *ши* союза яланах дефиспа çырмалла.

***Хуравĕ:*** ________________________

# Текста вуласа тухăр та 6-9-мĕш ĕçсене тăвăр

*(1)Акă Мамай сăрчĕ. (2)Чи тăрринче Тăван çĕршыва пĕлтерекен сăваплă хĕр арăм кĕлетки. (3)Кунтах темĕн чухлĕ палăк, илемлетнĕ чул хўмесем, чечексем. (4)Ĕмĕр çунакан вут патне эпĕ те чечек кăшăлĕ пырса хуратăп…*

*(5)Сăрт хĕррипе анса кăнтăр еннелле çул тытатăп. (6) Вăрçă вăхăтĕнче кунта пирĕн позицисем пулнă.(7)Ун чухне пур çĕрте те траншейăпа окопчĕ. (8)Таçтарах çакăнта Алексей Щеглов тăпри пулма кирлĕ. (9)Тĕрлĕ енне пăхкалатăп. (10)Палăк нумай кунта, шутласа та кăларас çук. (11)Айлăмри сăрă гранит юпа çине пăхрăм та – Элекçей сăн ўкерчĕкне курах кайрăм. (12)Çамрăк та илемлĕ каччă. (13) Элекçей те мана куçран пăхать: «Килтĕн-им, юлташăм?» – тесе ыйтассăнах туйăнать. (14)Палăк çине мĕн çырнине вулатăп. (15)Хамăр çырса хăварнă сăмахсемех. (16)Анчах вĕсене халь штык вĕçĕпе чĕрсе мар, ылтăнпа сĕрсе çырнă. (17)Ирсĕр пуля шăтарнă каски те кунтах.*

*(18)Ах, Алёшка, пĕрле çапăçсаччĕ çав. (19) Асăма килеççĕ-çке Харьков патĕнчи çапăçусем, унтан Çурçĕр Донецпа Дон çеçен хирĕ, вутлă Сталинградри чапа тухнă 62-мĕш çар… (20) Пур çĕрте те арăслан пек паттăрччĕ эсĕ. (21)Тăшмана çĕнтерессе пĕтĕм чун хавалĕпе шанса тăраттăн. (22)Элекçей тусăм, пирĕн пурăнас куншăн хутăн эс хăвăн çамрăк пуçна. (23)Канлĕ çывăр, таса тăпру мамăк пек çăмăл пултăр… (24) Эпир, сыввисем, ирĕк пурнăçшăн çапăçса пуç хунисене нихăçан та манмастпăр, яланах асăмăрта тытатпăр. (Илпек Микулайĕ*.)*

****Илпек Микулайĕ*** *(1915 – 1981) – чăваш халăх писателĕ.*

## 6 Текст содержанийӗн тишкерӗвӗ.

***Текст содержанийӗпе хӑш предложенисем тӳр килеҫҫӗ?***

*1) Ӗмӗр ҫунакан вут патне чечек кӑшӑлӗ пырса хуратӑп.*

*2) Алексей Петров вил тӑприне шыратӑп.*

*3) Ленинград патӗнчи ҫӑпӑҫӑва аса илетӗп.*

*4) Пур ҫӗрте те те упа пек паттӑрччӗ Алексей.*

*5) Эпир, сыввисем, ирӗк пурнӑҫшӑн ҫапӑҫса вилнисене манмастпӑр.*

***Хуравӗ:*** ______________________

| 7 | **Илемлĕх мелĕсене тишкерни** |
| --- | --- |

***Танлаштаруллă предложенисен номерĕсене кăтартăр.***

*(1) Чи тăрринче Тăван çĕршыва пĕлтерекен сăваплă хĕр арăм кĕлетки.*

*(2) Кунтах темĕн чухлĕ палăк, илемлетнĕ чул хўмесем, чечексем.*

*(3) Пур çĕрте те арăслан пек паттăрччĕ эсĕ.*

*(4) Тăшмана çĕнтерессе пĕтĕм чун хавалĕпе шанса тăраттăн.*

*(5) Канлĕ çывăр, таса тăпру мамăк пек çăмăл пултăр.*

***Хуравĕ:*** ____________________________

## 8 Лексика тишкерĕвĕ.

*Юлташăм* сăмахăн (13-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

***Хуравĕ:*** ______________________________

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

| **Ĕç номерĕ** | **Тĕрĕс хурав** |
| --- | --- |
| 2 | 25<e>52 |
| 3 | 246<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | аслăаывăлĕ |
| 5 | 23<e>32 |
| 6 | 15<e>51 |
| 7 | 35<e>53 |
| 8 | тусăм |



# Вăхăтпа пĕлсе усă курăр!

Ĕçĕн иккĕмĕш пайне тума **40** минут уйăраççĕ. Çак вăхăтра иккĕмĕш (вуланă) текста тимлĕ вуласа тухмалла, пĕрремĕш (итленĕ) текстпа танлаштармалла тата тест ыйтăвĕсене хуравламалла.


Экзаменра ӑнӑçу сунатпӑр!